А-ПĂЧА КĔНЕКИ

ТРУПИНА МАРХВИ

# МАРИНЕ

(КАЛАВ)

ЧĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар 1929 çул

ТРУПИНА МАРХВИ

# МАРИНЕ

(КАЛАВ)

Ађапăђа вађљи çырнă илемлĕ литтераттурă ăмăртăвĕнђе иккĕмĕш парне (преми) илнĕ

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР—1929 ç.

Отпечатано
в типографии школы ФЗУ
Чувашлит № 1113.
Заказ№ 231.
Напеч. 3000 экзамп.

# МАРИНЕ.

«...Ним марри мӗн пурӗ пулӗ...»
*(Интернатсионалтан).*

ХӖВЕЛ тухса сарӑлсан прахут ҫине лартӑм. Хусана кайатӑп.

Ҫанталӑк тӳлек, ӑшӑ. Сапсар хӗвел. Йӗри-тавра ҫап-ҫутӑ. Хӗвел шевли шыв ҫинҗе выҗаӗ. Прахут тӳлек Атӑла ҫурса, җашкӑртса пыраӗ. Прахутран сарӑлса кайнӑ хумсем сиксе, сирпӗнсе хӗвел ҫинҗе йалтӑр-йалтӑр туса илеҫҫӗ. Уҫӑ, аван, малалла пӑхас килет. Айакра, малта, ерешмен карти пек Хурамал ту*) кӗперри курӑнаӗ. Шывпа кӑвак пӗлӗт хушшинҗе кӗпер җӗнтӗрӗ ҫӑмӑллӑн курӑнса тӑраӗ. Җашкӑраӗ, җупаӗ прахут—кӗпер патнелле ҫывхаратпӑр. Кӗперӗн җул йуписене, илемлӗ җӗнтӗрне пӑхсан, етем ӑс-халӗнҗен, етем вӑйӗнҗен тӗлӗнес килет.

— Мост! Неҗҫа стеҫ стойаӗ!**) терӗ пӗр лапҗӑкрах сӑмсаллӑ, кӑвак куҫлӑ матрус.

Епӗр уҫӑ ҫӗрте тӑракансем, прахут ӑшнелле кӗме тытӑнтӑмӑр. Кӗпӗрленсе кӗнӗ җух, ҫынсем хушшинҗе епӗ җӑваш хӗрне курах кайрӑм. Шурӑ

*) Хусан патӗнҗи җукунҫул кӗперрине хӑш ҫӗрте ҫапла калаҫҫӗ.

**) Прахут тимӗр кӗпер айӗнҗен тухнӑ җух, йаланах уҫӑ ҫӗрте тӑракан ҫынсене прахут ӑшне кӳртеҫҫӗ.

тутăрлă, хура çивĕђĕ хулпуççи çинерех пынă. Çивĕђĕ вĕçĕ кăтрарах. Хĕрађа та мана пăхаť. Епĕ те ăна темиçе хутђен пăхса илтĕм. Те питкуçран, те епĕ ăна пăхнăран, çак хĕрађа епĕ ђăваш иккенне пĕлђĕ, сисрĕ. Мана хирĕç çавăрăнса тăђĕ. Тутипе çеç кăшт кулђĕ. Епĕ те çапла турăм. Паллашрăмăр. Хĕрĕ çавракa питлĕ, хура куçлă. Вунсаккăр-вунтăххăр çулсенђе пур.

— Ăçта кайатăн? терĕ вăл мана, шурă, илемлĕ шăлĕсене кăтартса.

— Хусана, терĕм епĕ.

— Хусана ĕçпеи?

— Ĕçпе. Шкул ĕçĕпе.

— Уђђиттĕлнитсăи?

— Уђђиттĕлнитсă.

Епĕ те Хусана кайатăп, аťа шалалла. Манăн унта лармалли вырăн пур, терĕ хĕрађа прахут ăшнелле кăтартса.

— Аťа, кайса ларар, терĕм.

Хĕрађа ђăпта куписем патнелле утрĕ. Сарă санталипе, хура ђăлхапа, çăмăллăн утса пыраť. Хăй çинђерех пÿсиллĕскер, ђăпта куписем хушшипе ансăр çĕртенех ирĕккĕн кĕрсе кайрĕ те, пĕр лутрарах ђăпта купи çине йашт сиксе хăпарса ларђĕ.

— Лар кунта. Епĕ мĕн Сĕнтĕрвăрринђен тухнăранпах çакăнта ларса пытăм. Аван кунта, терĕ хĕрађа. Хăй урисене айалалла усăнтарса, ђĕрçинђи кĕпине туртса ури çинелле витĕнтерсе хуђĕ.

Епĕ те хĕраҕапа йунашар ҕăпта купи çине хăпарса лартăм. Хĕраҕанăн унта тутăрпа çыхнă йапаласем пулнă. Манăн пĕҕĕк çатан арҕана та хăй йапалисемпе пĕрле лартрĕ. Ҕипер вырнаçса ларсан епĕр уни-куни çинҕен калаçма тытăнтăмăр. Хĕраҕа мана шăтарас пек пăхаť.

— Епĕ сана халиҕҕен таçта курнă. Курнă пекех туйăнаť.

— Курнă та-и тен, терĕм.

— Курнă пек çав. Таçта курнă.

— Кантурта мĕнте курнă пуљ, терĕм

— Хăш йалсем есĕ?

Епĕ хам хăш йалне каларăм.

— Çу-ук! Епĕ сирĕн йенелле пыман. Епĕ хам Сĕнтĕрвăрри panҕисем, терĕ хĕраҕа. Вара кăшт шухăшласа тăҕĕ те, хавасланса:

— Есĕ Хусанти 3-мĕш № аҕа çуртне пымани?

— Пынă. 1924-мĕш çулта, çуркунне екскурççине пырсан 3-мĕш №-лĕ çуртне те кĕрсе тухнăҕҕĕ. Хĕраҕасем екскурççине пынă уҕҕиттĕлсене ҕей ĕçтерҕĕç, терĕм.

Вăт епĕ сана çавăнта курнă. Уҕҕиттĕлсене епĕр ĕçтертĕмĕр. Епĕр ун ҕух тешурнăйсем тăваттăнҕĕ. Епĕ, Хвекла, тата икĕ тутар хĕрĕ: Нафисăпа Макийă. Епĕ хам Марине йатлă.

Çапла каласан, епĕ ҕăнах та аҕа çуртĕнҕе пире хăна туса йанă хĕраҕасене аса илтĕм. Марине ун ҕухне шакла пуçлăскер, вăр-вар çеç ҕей хатĕрлесе

хуђĕ.. Парлаттарса ĕçлесе çӳрет. Мăйĕнђи хĕрлĕ калстукĕ вĕçкелесе кăна тăрат̆. Çĕмĕрт пек куçĕсем ăслăн, çивĕђђĕн пăхаççĕ. Хам ăшăмра епĕ ку хĕр-ађана ăмсанса илнине те халĕ аса илтĕм.

— Хусана, мĕн?.. Ĕçпе кайатăни? терĕм епĕ.

— Ĕçпе кайатăп та... анђах ĕçне тепле туса хурăпха.

— Мĕн ĕçпе апла?

Хĕрађа калама тытăнђĕ.

— Епĕр кăçал хĕрарăмсем ушкăнланса хăйар акрăмăр. Ани те çемçе те, хăйарĕ пит ђипер. Çеçке кăларнă. Урпа пĕрђи пек вĕтĕ хăйарсем пур. Пĕр ăнсан хăйар питĕ нумай пулмалла.

— Ђылай акнă-и хăйарне, миçе теçеттин?

— Акассине нумай акнă. Мĕн пурĕ 10 теçеттина йахăн пулат̆, 8 теçеттин çерем уçса акрăмăр, 2 теç. çукрах кантăр ани кĕђĕ. Пирĕн улăхра хăйар пит ăнса пулат̆. Епĕр хăйарне акнă ђухнех çапла шут турăмăр: хăйара пирĕн ђĕрĕлле сутас мар, тăварласа сутас, терĕмĕр. Çав ĕçпе вĕтха Хусана кайатăп. Епĕ хĕр-арăм ушкăнĕнђен уполнођђĕннăй пекки, терĕ хĕр. Хăй пĕђĕкрех тутисемпе йăл кулса илђĕ.

— Ăçта вырнаçтарас тесе шухăшлатăн есĕ тă-варлă хăйара? терĕм епĕ.

— Хусанти пĕрер копператтивпа çыхăнас тесе шухăшлатпăр. Çавăнпа вĕт, хăйарĕ çеçкере ђухнех, хăйара вырнаçтарма вырăн тупас та, вара мĕн тумалли куçа курăнса тăрат̆, терĕмĕр...

Çапла калаçкаласа ларнă ђухне пирĕн пата пĕр ађа пынă тăнă. Епĕр вăл пирĕн пата пынине курман. Вăл таçтан, ђăпта куписем ăшĕнђен сисĕнкĕсĕр сиксе тухнă пекех туйăнђĕ. Ађа çĕтĕк çанăллă хĕрлĕ кĕпепе. Хăрах йĕм пĕççи çурăк, кĕске. Йытă çуркаласа таткаласа пĕтернĕ пек. Çара уран. Пуçне сăран карттус тăхăннă. Карттусĕ, пысăкрахскер, пуçĕ çине лап анса ларнă.

Ађа карттусне хăрах аллипе пĕрмай каçăртса лартах тăрат̆. Ађиййĕн куçĕсем ђейе, вĕлт-вĕлт çеç выљаса пăхаççĕ. Ађи хăй пĕр вунвиçĕ-вунтăват çулсенђе пур.

— Ех, краштанки! Тайте на опет! Йа спойу вам песіђу, сыкрайу на лошках!—терĕ ађа сассине хытă кăларасшăн çухăрса. Çавăнтах икĕ кашкипе шăкăр-шăкăр тутаркаларĕ те, хăрах урине çĕклесе, аллисене выљатса йăкăлт сиксе илђĕ. Унђђен те пулмин ўсĕрсе илсе йурласа йађĕ:

„Теçаттый кот советской влаçти,
Савоты крепнут рутниках...“

Ађа сассине хытăрах кăларасшăн питĕрленсе йурлат̆. Сасси хăйĕн илемсĕр, çурăк пек ђăрлатат̆, пырĕ хăйăлтатат̆. Вăл йурлани савăнтармас̆т̆, ђуна киђемлентерсе йарат̆. Хăйне ăна вĕçĕмсĕр хĕрхенес килет. Епĕ ăна 20 пус укçа патăм. Марине çур хăпарту, килте пĕçернĕ кулађ, хуçса пађĕ. Ађа кулађа хыпалансах йарса илђĕ. Аллине тытнă тытман çемçе кулађа çăварне тĕркелесе ђиксе

пысăккăн çыртса илђĕ. Выçăхнă йытă пек çыртăка шăлĕсемпе урлă-пирлĕ каскаларĕ те, хыпаланса çăтса йађĕ. Вара мăйне хутлатса пирĕн патăртан пăрăнђĕ. Çав ађа йепле паçăр пирĕн пата сисĕнкĕсĕр пырса тухрĕ, халĕ те çаплах сисĕнкĕсĕр çухалђĕ.

Мариненĕн уçă кăмăллă пиђĕ киђемленђĕ. Вăрăмăн сывласа илсе çапла каларĕ.

— Епĕ те пĕр çу хушши Хусанта ыйткаласа çўренĕ.

— Санăн аçу-аннў çуким?

— Атте пурри пур та... килте пурăнмаст, Çармăсра пурăнат. Анне—амаçури. Тăван анне епĕ тăхăр çул тултарсанах вилнĕ.

Епĕ: Марине хăй пурăнăçĕ çинђен каласа паратхă ĕнтĕ, тесе итлеме хатĕрленейнĕђђĕ; анђах пирĕн Маринепе калаçса ларма май пулмарĕ. Кĕтмен çĕртен пирĕн ума тепĕр ађа кăштăрт пырса тăђĕ. Хăй лапсака пуçлă. Сарăрах, ђылайранпа хађă курман çўçĕ кĕçеленсе кăткăсланнă. Ађи хăй пĕђĕккĕ, имшеркке. Пиђĕ сарăхнă, сăмси шĕвĕр. Çўхе, ăман пек тутисем ађа ђăмланă çемĕн авăнкаласа тăраççĕ. Аллинђе пĕђĕк татăк—хăпарту татки. Лешĕ малтанхи ађа Марине панă кулађа панă пулас. Ађа хăпарту таткине пĕђĕккĕн иле-иле çисе тăрат. Хăй çĕтĕк кĕске сăкманпа. Кĕпи те пур, те çук—курăнмаст. Килте тĕртсе тунă кăвак йĕмĕ пыљђăкпа вараланса пĕтнĕ. Çара урисем те

пыђђӑк тӗслех. Пырса тӑрсанах епӗр ку ађа ђӑваш ађи иккенне пӗлтӗмӗр.

— Ӑҫта кайатӑн? Ӑҫтисем есӗ? тесе ыйтрӑмӑр. Епӗ Ҫӗрпӳ йенђисем. Халӗ пӗр ађапа Ђулхуларан анатпӑр.

— Мӗншӗн кунпек ҫӳретӗн? Аҫу-аннӳ ҫуки?

— Ҫук ҫав.

— Ађа ҫуртне кӗме тӑрӑшас пулаť.

— Епӗ халӗ те ађа ҫуртӗнђе пурӑнса.

Кӑҫал ҫуркунне ӗмпиђи хӑй патӗнђе усратӑп тесе пырса илђӗ те, ҫӗр валеҫсе пӗтерсен инки хӑваласа кӑларса йађӗ. Ађа ҫуртне тепӗр хут кайрӑм—илмерӗҫ. Халӗ ӗнтӗ Хвеťкӑпа Крыма кайас тетпӗр.

— Кам вӑл сан Хвеťкӑ?

— Йулташ. Веҫ паҫӑр есӗр ӑна хӑпарту панӑҫке, ҫавӑ.

Калаҫкаласа тӑнӑ ҫӗрте ађа хайхи хӑпарту таткине пӗђӗккӗн пӗђӗккӗнех ђӗпӗтсе ҫисе йађӗ. Ӗнси хыҫне кӑђӑртаттарса хыҫса илђӗ, хышаланкаларӗ те, ђӑпта купи ҫумне тайанђӗ. Хӑй пире куҫран пӑхаť.

— Ҫимелли... ҫийес килет те манӑн, терӗ ађа ђӗрне вӗҫне хышаклакаласа.

Епӗ ӑна икӗ ҫӑмартапа ҫӑкӑр татки патӑм. Марине хӑпарту татки пађӗ. Ађа епир панӑ йапаласене сӑкман аркипе ҫавӑрса тытрӗ. Те савӑннипе, те питӗ ҫийес килнипе ађанӑн ырхан аллисем ђӗтресе кайрӗҫ. Сӑкман аркинђен пӗр ҫӑмарти тухрӗ ӳкрӗ. Ҫат!

туса çурăлҫĕ те, кăлтăр-кăлтăр кусса ҫăпта купи айнелле кĕрсе кайрĕ. Аҫа çав çăмартана илме пĕшкĕнҫĕ. Çав вăхăтра пирĕн пата 3-мĕш класран пĕр майрапа вырăс пырса тухрĕç. Майранăн куçĕсем хĕрлĕ. Сăмсине пĕрмайах нăшлаттарса сăмса тутрипе шăлать.

— Вот, етот самый ноҫҫевал пот моей лавкой. Накнулçа, витно спрататçă хоҫет, терĕ майра аҫа çине пŭрнипе тĕллесе кĕтартса.

Вырăс аҫа çине пăхса тăҫĕ те, çавăнтах питнекуçне тискерлетсе, хайарлатса пăрахрĕ.

— Пр-р-рокљатый ҫувашљонок! терĕ вăл шăлне çыртса. Унҫҫен те пулмин аҫана сасартăк мăйĕнҫен йарса илсе ҫикелентерсе йаҫĕ. Аҫа çари çухăрса тимĕр йупа çине кайса тăрслатрĕ. Пиҫĕ хĕп-хĕрлĕ йун пулса çĕре пĕтĕрĕнсе ŭкрĕ. Икĕ çăмартапа çăкăр таткисем сапаланса кайрĕç. Пĕр-ик-виçĕ çын пирĕн пата мĕн пулнă тесе пырса тăҫĕç.

Сăмсине шăлсах тăракан хĕрлĕ куçлă майран ылттăн сехет çухалнă иккен. Пырса тăнă çынсем, хăшĕ-пĕри, сехете çак аҫах илнĕ, хăшĕ-пĕри, ку мар, теççĕ. Майра, çак аҫа, тесех тупăшать. Аҫа сăмсинҫен, çамкинҫен тухакан йуна сăкман çаннипе шăлать. Хăй çынсем çинелле пăхмасăр пĕтĕм пĕҫĕк ŭт-пĕвĕпе сиксе ĕсĕклет.

Йашлаттарса утса пыҫĕ шурă карттусла, çутă тŭмеллĕ кăмантир. Мĕн пулни çинҫен ыйтрĕ.

— Саперет ево! терĕ аллине сĕлтсе. Хăй çăмăллăн прахутăн тепĕр йенелле утса кайрĕ. Аҫана çав

самантрах пӗр матрус таҫта илсе кайрӗ. Епӗр Маринепе иксӗмӗр пăхкаласа йултăмăр.

Ҫын сăтăр тусассăн, ҫын сăтăрне тӳсес килмест, ҭун тарăхаҭ. Пире те, такам, сисӗнкӗсӗрех сăтăр туса хăварнă пек пулҭӗ. Мӗн курнипе, илтнипе иксӗмӗр те пит кăмăлсăрланса пӗр вăхăтлăха калаҫмасăр лартăмăр. Таҫтан ҫӳлтен, ройаљ калани илтӗнет. Илемлӗн, хӗпӗртеттермелле илтӗнет ройаљ сасси, анҭах манăн ăна итлес килмест. Ҫемҫен илтӗнекен ройаљ сасси ман ҭӗрене хыттăн пырса перӗннӗ пек туйăнаҭ, ыраттараҭ. Ройаљ калаканӗ мана йури мăшкăласшăн пек кӗввине илемлӗрех, уҫăрах калана пек туйăнаҭ.

Йавăр шухăш пуснипе епӗр Маринепе ҭылайҭҭен пӗр-пӗрине сăмах ҭӗнмесӗр лартăмăр. Ҫасартăк прахут вăрăмăн ҫухăрса йаҭӗ. Тăрса пăх—Хусан. Прахут пристăне ҫитесси инҫе мар. Прахут ҫинҭен тухмалли тӗле халăх ҭынăна пуҫларӗ. Ҫын нумай. Халăх пухăннă ҫӗрте тăма та хӗсӗк. Епӗр Маринепе хыҫаларах, пиҭкесем патнелле пырса тăтăмăр. Унта Хвеҭкăна курах кайрăмăр, пиҭкесем хушшинҭе тăра параҭ. Пире курҭӗ те, пиҭкесем хушшинҭен хӗсӗрленсе тухрӗ. Ман ҫумма йăпшăнса пыҭӗ.

— А ҭасы-тă вҫал не Ваҫка, терӗ вăл шăппăн. Вара кăшт пăрăнҭӗ те, ыхы-хы-хы... тесе пыр шăтăкӗпе кулса илҭӗ. Епӗ нимӗн те тăнланаймасăрах йултăм. Хвеҭкă куҫ хупса илиҭҭен ҫынсем хушшинелле шăтарса кӗрсе кайрӗ.

Вăл темĕн, прахут, пристăњ çумне çыпăçрĕ. Малта тăракансем прахут çинђен тухма пуçларĕç. Епĕр те Маринепе çынсем хыççăн кăшт малалла шурăмăр.

— Тењки-и! Тењки выташђили-и! тесе хайаррăн çухăрса йађĕ пĕр çамрăк, сарă вырăс. Хăй хресђенле тумланнă, çăпатапа. Çурăм хыçĕнђе кутамкка.

— Тринатсăт руплов! Пропали тењки-и! тесе йĕрсех йађĕ. Çынсем пĕр вăхăтлăха пăлханса, кăшкăрашса илђĕç. Укçа çухатнă вырăс çынсем урлă унталла-кунталла пăхкаласа кайма хăтланђĕ, çынсене тĕрткелерĕ.

— Вот он! Вот! терĕ вырăс таçталла, пристăњ ăшнелле кăтартса. Хăй малалла çынсене ђавсапа хирсе васкаса кайрĕ.

Халăх прахут çинђен тухса пĕтерехпе, епĕр те, Маринепе тухрăмăр та тӳрех трамвай çулĕ çинелле утрăмăр. Трамвай ђарăнса тăрас çĕрте трамвайа кĕтсе тăратпăр. Кунта та çынсем нумай—тĕрлĕрен халăх: вырăс, тутар, çармăс. Çармăс хĕрарăмĕсем хитре тумланнă майрасемпе пĕлнĕ-пĕлмен вырăсла калаçкаласа тăраççĕ. Пĕтĕм калаçни те çав песпризорнăйсем çинђен çех.

— Рапотаĭ натă ево, пољше нињево, тесе хуђĕ йулашкинђен çармăс хĕрарăмĕ.

— Та! та! но тољкă рапотаĭ ево не саставиш. Упиĭ их натă, вот што! терĕ паçăр сехет çухатнă майрапа пулнă вырăс.

Тĕрлĕ калаçаççĕ. Хăшĕ-пĕри аҕасене хĕрхенеççĕ. Хăшĕ-пĕри çав вырăс каланипе те килĕшекенни пур.

Çапла калаçса тăнă çĕре хайхи укçа çухатнă вырăс лапсăртатса та çитрĕ. Хăй ăшăпа пиçнĕ пек йĕп-йĕпе тарланă. Çамки çинҕе тар пăрçа пек куранат.

— Ух! уморилçă! терĕ вăл çынсем патне васкаса çитсе тăрса. Кĕпе аркипе питне шăлҕĕ.

— А теңки вçотаки нашлиç! терĕ вырăс хĕпĕртенĕ сасăпа.

Ăна виç-тăват хресҕен сырăнса илҕĕç. Çармăс арăмĕ пырса тăҕĕ. Укçа мĕнле тупăнни çинҕен ыйтаççĕ.

Хайхи Хвеҭкăна тытнă иккен. Ылттăн сехет, кĕмĕл кашăк тупнă, тет. Çак йапаласене Хвеҭкă çĕтĕк ҕăлха ăшне ҕикнĕ, тет те, аллинҕе тытсах тăнă, тет. Вун виçĕ тенкĕ укçине ниçта пытарма та ĕлкĕреймен, çаралла çараллах, тет.

Сехет çухатнă майрапа вырăс çакна илтсен пристăң патнелле ҕупрĕç.

— Сопакке сопаҕйа смерт! терĕ вырăсĕ, айкинелле пăхса лаҕ! сурҕĕ. Хăй савăннă пек пулса аҕа шыва сикни çинҕен каласа паҕĕ.

Хвеҭкă милитсисенҕен вĕçерĕнсе пристăң çинҕен тӳрех шыва йара панă иккен. Сикнĕ ҕух, шывра, шĕвĕр йапала çине пырса тăрăнса хырăмне çурса пăрахнă. Шывран кăлариҕҕенех аҕан пырши-пакки йăтăнса тухнă. Аҕи хăй вилеймен те, вилет пуљ терĕç, тет.

Ҕăнкăр-ҕанкăр! ҕăнк-ҕанк! турĕ пирĕн хыçра.

Çавăрăнса пăх—трамвай кĕрлесе килет. Ђарăнђĕ. Çынсем васкаса трамвай çине ђышăнма тытăнђĕç. Епĕ те лартăм. Марине вађђи хам çумма вырăн хатĕрлерĕм. Марине, темме ларма васкамасť. Пристăӊ йенелле пăхнă та, тĕлĕрнĕ пек тăраť. Хăйĕн пиђĕ хĕп-хĕрлĕ, тутисем йĕрсе йарас пек пулнă, турткаланса тăраççĕ.

— Лар, Марине! терĕм епĕ.

— Айук! Ваçкăна шырама кайас тетĕп, терĕ.

Çав самантрах трамвай тапранђĕ. Епĕ Маринене нимĕн те калаймарăм. Марине тăрсах йуђĕ. Тепре çавăрăнса пăхнă ђух, епĕ Маринене пристăӊ патнелле хăвăрт утса кайнине куртăм. Пирĕн трамвай хытă кĕрлесе Хусаналла кайрĕ.

II

Тепĕр икĕ кунтан, каçаллапа, епĕ Хусантан киле кайма пристăӊ çине пытăм. Прахут килменха. Пристăӊ çинђе халăх çук. Пĕр виçĕ-тăвата майра та икĕ вырăс симĕс арђа çинђе ђей ĕçсе лараççĕ. Вĕсенђен инçех мар кулађ сутакан майрасем кăрккасем пек хутланса ларнă та, кулађ илме пыракансене кĕтеççĕ. Икĕ тутар, хыттăн пакăлтатса пристăӊ çине пушă пиђкесем кустара-кустара кÿртеççĕ, пĕр кĕтесселле купалаççĕ. Пăхатăп— Марине те кунта—ватăрах, тирпейлĕ тумланнă тутарпа калаçса тăраť. Тутарĕ ђăвашла шыв пек калаçаť. Халђђен ђăваш хушшинђе пулнăскер пулмалла.

Епĕ Маринене тĕл пулнăшăн пит савăнтăм. Марине те мана айакранах курса хавассăн пырса алă тытрĕ.

— Килеллеи?

— Килелле!

— Ваçкăна тупрăни?

— Тупрăм, кунта вăл. Хампа пĕрле йала илсе кайатăп. Пире пурĕ пĕр хăйар хуралçи кирлĕ. Кĕркунне епĕ ăна йе ађа çуртне, йе пĕрер майлăрах çемйене усрама парăп. Халĕ çывраť вăл, терĕ Марине кĕтесселле кăтартса.

Кĕтесре, пиђкесем хыçне, Ваçкă тĕршĕнсе выртнă. Аллисене икĕ ђĕркуççи хушшине хĕстернĕ те тутлăн çывăраť. Тутар пирĕн паталла пыђĕ. Марине çинђен каласма тытăнђĕ. Унăн Марине çинђен калаçас килни паллах. Итлекен пуршăн вăл кăмăллă. Сăмахĕсене сăтăрттараť кăна.

Тутар калаçнинђен епĕ акă мĕн пĕлтĕм:

Маринен ĕçĕ ăнса пыраť иккен. Унăн хăйарне Хусанти нумай лавкаллă хула копператтивĕ илме пулнă. Ку тутар—Сапир Сайфулин—Маринесен йалне хăйар тăварлас ĕçпе кайаť.

Ваçкă вăранса тăрса ларђĕ. Хыçăнкаласа йĕритавра пăхкаларĕ. Марине Ваçкăна çимелли пађĕ. Вара Ваçкăпа йунашар кукленсе ларса иккĕш шăкăлтатса калаçма тытăнђĕç.

Тутар хăй сăмахне çаптараť:

— Марине пирĕн копператтив правленинђе хăйар парасси çинђен каласа парсан, епĕ ђăнахах та

ĕç тухаттши тесе, пĕр çын патне ђупса кайрăм. Çав çын Маринесен йалĕнђен инçе мар. Хăй вăл кунта çăмарта склатĕнђе ĕçлесе пурăнатť. Нумайах пулмасť киле кайса килнĕ. Çав çын мана Марине халăх хушшинђе ĕçлени çинђен каласа тĕлĕнтерђĕ. Марине çав йала пырађђен, унта ушкăнлă ĕçсем пулма мар, укшăнлă ĕçсем çинђен никам та тĕлленмен те. Марине пĕтĕм ушкăнлă ĕçсене пуçарса пыратť. Кăçал унта çăмарта сутакан йултăшлăх, ушкăнлă хăйар пахђи тунă. Тата, çав Марине тăрăшнипех, халăх пахђа çимĕçĕ—купăста, кăшман типĕтмелли авăн лартасшăн. Пирĕн правленинђе ун çинђен те каларĕ Марине. Малашне пирĕн правлени çав Маринесен йалĕнђи ушкăнпа тађăрах çыхăнма шухăшлатť. Çулсерен çулла хăйар илсе, кĕркунне йе хĕлле типĕтнĕ пахђа-çимĕç илсе хурас тет. Маттур ку хĕр! Хастарлă. Пирĕн правлени пуçлăхĕ Марине ĕçĕсене пĕлсен, çапла каларĕ: ђăвашсен кашни йалтах кун пек хĕрарăм пĕрер те пулин пулсан—ђăвашсем сотсиалисăмлă пурăнăçран инçех тăмаççĕ, терĕ.

Тутар калаçма ђарăнђĕ. Маринепе Ваçкă тем çинђен пуплеççĕ. Вĕсем пирĕн йенелле пăхмаççĕ те. Ваçкă кулађ таткине çийет. Çирĕ, çирĕ те, çисе йарайманнине Маринене пађĕ. Марине татăка тутăр ăшне ђиксе çыхса хуђĕ. Тутар Маринепе Ваçкă йенелле пăхса тăђĕ те каллах шăрантарма тытăнђĕ.

— Акă ĕнтĕ, веç çав етем ђĕппипе аппаланатť. Тепĕр

çын пулсан пăрахаť те кайаť. Марине ку мĕскĕне хăй ађи пек, шăлнĕ пек пăхаť. Ку тата ырă ĕç.

Епĕ тутар каланипе килĕшсе прахут çинђе пеcприсорнăйсене курни çинђен кĕскен каласа патăм.

— Хула вăл йал, уйхир мар çав. Хула вăл килсĕр çÿрекен тăлăх-турата пит ђасах пăсса йурăхсăр етем тăваť. Марине çак ађана хуларан йала илсе кайни çак ађашăн пит аван. Вăл унта уйхир ĕçне çыпăçтарса ĕçлеме вĕренет, сывăрах пулаť, пăсăлас йенђен йалта пит хăрамаллийех çук.

Прахут çухăртни илтĕнђĕ. Пăх—епĕр ларса кайас прахут киле пуçларĕ. Пысăкскер, анса ларма пынă хĕвел çуттипе хĕрлĕреххĕн курăнса пыраť.

Маринепе Ваçкă сиксе тăрса пирĕн пата пыђĕç.

— Аťа малай, çимелли илме, терĕ тутар Ваçкăна. Ађана аллинђен çавăтрĕ те, хурлăхлă-илемлĕ кĕвĕ шăхăрса кулађ сутакансем патнелле кайрĕ. Ваçкă пуçне каçăртса тутар çинелле ăшшăн пăхса кăшт сиккелесе пыраť.

Епĕр Маринепе прахут курма пристăŋ хĕрне, уçă çĕрелле пырса тăтăмăр. Прахут килнĕ майăн пристăŋ çине халăх пухăна пуçларĕ. Прахут пырса ларђĕ. Унтан тухакан халăх тăвăрла пуçларĕ. Пире хĕсĕрлесе çитрĕç. Епĕр вара, Маринепе, пристăŋ çинђен тухса Атăл хĕрне пĕр улахрах вырăна кайса лартăмăр. Тÿрех пирĕн умра Атăл. Прахут çурри йахăн, Атăл леш йенĕ, хĕвел курăнђĕ. Хĕвел анса ларма пĕлĕт хĕррине пынă. Хăй пысăк, хĕп-хĕрлĕ

курăнаť. Хĕвеланăçĕ те, Атăл шывĕ те пĕр тĕслĕ—хĕрлĕрех, йăваш çутăллă курăнаť. Хĕвеланăçĕ йенелле пăхсан йал, йалти шкул, ађа-пăђа аса килђĕ мана. Прахут çинђи Хвеťкăна аса илтĕм... Хăйĕн йăтăнса тухнă ăшђиккипе ман куç умне килсе тăнă пекех туйăнђĕ.

— Мĕнлеши хаљ Хвеťкă? терĕм епĕ.

— Вилет пуљ, вилђĕ те пуљ. Пиртен кайран вăл шапшурах, вăйсăр, вилнĕ пекех выртса йулђĕ. Пирĕн çине, йулашки хут пуљ, пăхрĕ хурлăхлăн, терĕ Марине.

— Ађи питĕ çивĕђскерђђĕ. Ђипер ўснĕ пулсан, пăсăлман пулсан, мĕн тĕрлĕ çын пулма пултарĕђђĕши вăл? терĕм.

— Ан та кала. Çул çинђе ўсекен курăксем таптанаççĕ, аманаççĕ. Çав песприсорнăйсем те çавăн пекех: вĕсене пурăнăç ађашламасť, пахалаламасť, терĕ Марине.

Марине айаккалла, хĕвеланăçĕ йенелле пăхрĕ. Кăшт шухăша кайса тăђĕ те, хăйусăртарах пек, хуллен çапла каларĕ.

— Епĕ хам песприсорнăй пулнă та... çавăн пеккисене курсан, пит ăш çунаť манăн, пит хĕрхенес килет, терĕ.

Манăн Марине мĕнле песприсорнăйран халăхшăн усăллă ĕçе çыпăçни çинђен пĕлес килетђĕ. Марине хăй песприсорнăй пулни çинђен асăнсан, епĕ тўрех:

—Каласа парха, Марине, ху пурнăçу çинђен, терĕм.

Марине шывалла пӑхса, вӑрӑмӑн сывласа илсе хуллен калама тытӑнҫӗ.

— Анне—ама ҫӳри, атте ҫармӑсра пурӑннине пӗлетӗр ӗнтӗ есӗр. Анне аҫасемпе килте пурӑнаҫ. Епӗ тӑван аннерен тӑхӑр ҫулхи аҫа йулнӑ. Амаҫури мӗнлине хӑвах пӗлетӗн ӗнтӗ... Пырсан, пӗрик ернеренех, мана ҫӑкӑр пами пулҫӗ. Хӑйӗн виҫӗ аҫине сӗтлӗ пӑтӑ пӗҫерсе ҫитерет, мана типӗ ҫӑкӑр та ҫук. Епӗ малтан хурӑнташсем патне кайкаласа пурӑнтӑм, кайарах ыйткаласа ҫӳреме пуҫларӑм. Ҫапла ыйткаласа ҫӳресе епӗ Вӑтакас йалне ҫитнӗ тӑнӑ. Ку йал—паллӑ йал. Ку йалтан ҫулла, пушӑ вӑхӑтра, йалӗпе пекех ҫынсем Хусана ыйткалама кайаҫҫӗ. Ҫав Вӑтакас йалӗнҫе мана пӗр арӑм Хусана илсе кайма пулҫӗ. Хӑйӗн куҫӗ витӗрех марҫҫӗ те, ҫавӑтса ҫӳреттереҫҫӗ. Ҫуркунне, ҫимӗк умӗн епӗр ҫав арӑмпа Хусана кайрӑмӑр. Пӗрмай Хусанта, урам кӗтессисенҫе, ыйткаласа тӑрса, толкуҫккӑ пасарӗнҫе ҫӳресе пурӑнтӑмӑр. Ҫӗрле ҫывӑрма пӗр кивӗ ҫул ҫуртӑн айалти хутне кӗреттӗмӗр. Вӑл ҫурт хула тулашнерех, пӗр лапӑ вырӑнта лараҫҫӗ. Пирӗн хваттере вара, йӗпе-сапа ҫух, ҫынсем кукӑҫ ӑшӗ пекех ҫыхӑнаҫҫӗҫ. Кунта такам та пур: тутар, вырӑс, ҫӑваш та нумай. Пуринҫен ытла аҫа-пӑҫа, песприсорнӑйсем килсе тулаҫҫӗҫ. Пысӑкрах песприсорнӑйсем хуларан тӗрлӗ йапаласем вӑрласа килсен, вара умран йулиҫҫен апат ҫийеҫҫӗҫ, ерех ӗҫеҫҫӗҫ. Хӑш ҫух вара ҫапӑҫма тытӑнаҫҫӗҫ.

Ӗҫ умӗн мана йертсе Хусана килнӗ арӑм киле

кайрĕ, мана илсе каймарĕ. Пĕр вунпилĕк, вунтăватă çулхи вырăс хĕраҫипе туслашса кайрăм. Вăл мана хăйпе пĕрле çывăрттараҫҫĕ, хăй крушкинҫен ҫей ĕçтеркелеҫҫĕ. Арçын аҫасем мана хĕнеме пырсан, ҫараҫҫĕ. Хăй Нинкă йатлăҫҫĕ. Мана йăмăк теҫҫĕ. Нинкă кăнтăрла ыйткалама питех çӳремесҫĕ. Хăш ҫухне çĕрле таçта кайа-кайа килеҫҫĕ. Пĕрик хутҫен Нинкă ӳсĕр тавăрăнҫĕ. Ҫас-ҫасах мана Нинкă ҫейникпе ҫайнăйа вĕри шыв илме йараҫҫĕ. Шывне, вара вăрттăн хуçи кураҫҫен йухтарса илмелле. Хуçи курсан, вара йатлаçса, тапкăпа ҫайнăйран сирпĕнтереҫҫĕ. Шыв вăрлама кайас мар—Нинкă хĕнет, çĕрле йунашар çывăрттармасҭ. Хăш ҫух Нинкă епĕ ыйткаласа тупнă укçана пĕтĕмпе шăйăрса илеҫҫĕ.

Кĕр çите пуçларĕ. Ир-каç сивĕ. Манăн ура та çара, кĕпе те пĕр хут кăна. Килтен епĕ пĕр хут улаҫа кĕпепе, çара пуçăн, çара уран кайнă.

Пĕринҫе епĕ Нинкăран пĕр кунта ыйткаласа тупнă укçана пытартăм. Вăл мана çавăншăн тытса питĕ хытă пĕçерҫĕ. Çавăнтан кайран умлă-хыçлă сивĕ çăмăр çурĕ. Епĕ ыйткалама тухаймарăм. Пирĕн Нинкăпа иксĕмĕрĕн çимелли нимĕн те пулмарĕ. Икĕ кун ним çимесĕрех пурăнтăмăр. Вара каçаллапа, çăмăр витĕрех пасара пытăмăр. Иртен-çӳрен те çукрах. Ыйткаласан та нимĕн те тупăнмасҭ. Пĕр пĕҫĕк лавккара суккăртарах ватă майра аҫа-пăҫа кĕпи сутса лараҭ. Умĕнҫе виçĕ-тăватă çăм тутăр,

икĕ мăшăр ђăлха выртаççĕ. Лавка ăшĕнђе кĕпесем ĕређĕпе çакăнса тăраççĕ. Нинкă çав карђăка курђĕ те, кăшт шухăшласа тăрса акă çапла каларĕ:

— Есĕ çак карђăк патне пыр та, кĕпе кирлĕ, мана виçеллĕ кĕпе пури, тесе ыйт. Карђăк кĕпе кăтартма çавăрăнсан, есĕ мана çав ик мăшăр ђăлхана ил те вăрттăн тыттар, терĕ. Епĕ Нинкă хушнине тума пултăм. Карђăк патне пырса, кĕпе илсе пар, терĕм. Карђăк, ватăскер, мана кĕпе илсе кăтартма çавăранђĕ. Епĕ çав вăхăтра ђăлхасене илсе алла хыçалалла йатăм. Нинкă, ман хыçра тăраканскер, ђăлхасене илђĕ те вĕлт çеç шурĕ. Карђăк ман йенелле çавăрăнсанах, ђăлхасем çуккине курса, мана йарса илђĕ, милитсине çухăрђĕ. Ђупса пыђĕ милитси. Ман çумра йапали çук пулин те милитси мана путка илсе кайрĕ. Путка çитсен телефон патне пырса такампа, ман çинђен пулмалла, сăмахласа илђĕ. Çав çĕр епĕ выçах путкăра çĕр каçрăм.

Марине кăшт ђарăнса тăђĕ. Епĕ, Марине каланине пĕр сăмах сиктермерĕм. Марине каласа кăтартинпе ман ђун пăђăрланса килђĕ, сывлăш пĕтсе ларнă пекех туйăнђĕ. Епĕ йĕри-тавра пăхса, пĕтĕм кăкăрпа уçă сывлăша вăрăмăн туртса илтĕм.

Хĕвел анса ларнă, анђах кун çути çухалманха. Кăвак пĕлĕт те, йап йака выртан шыв та халĕ тĕттĕм-кăвак пулнă. Прахут çинђе, кун çутине çĕнтерсе, електритсă ламписем йăл çутăлса кайрĕç. Атăл варринђе шурă пысăк кимĕ курăнђĕ. Йака

шыва кимĕ пулă пек çурса пыраŤ. Кимĕ çинђе такам илемлĕ, çирĕп саслăскер йурлаŤ. Вăл йурлани шыв çинђе йанăрса кайаŤ.

Епĕр Маринепе çав çын йурланине кăшт итлесе тăтăмăр та, Марине малалла калама тытăнђĕ.

...Тепĕр ирхине путкăна пĕр тирпейлĕ тумланнă майра пыђĕ. Майри çамрăк, ђипер. Милитсине хут татки парса хăварса мана майра хăйпе пĕрле пыма хушрĕ. Путкăран тухса ђылай утсан, пĕр пысăк çурта çитрĕмĕр. Кунта мана майра пĕр пӳлĕме кӳртсе йађĕ. Пӳлĕмре тепĕр майра лараŤ. Хăй мăнтăр, ђавсисене тавăрнă, пир саппун çыхнă. Çав майра ман кĕпене хывса илђĕ те, кантăр вăрри пек шултра пыйтăсене курсан, тутисене ирсе пăрахрĕ. Шăлне çыртса ман кĕпене çулăм йавăнса тăракан кăмакана вăрăнтарђĕ. Çӳçе машшинкăпа йап-йака касса йађĕ. Вара мана пĕр пĕђĕк пӳлĕме çавăтса кĕђĕ те лĕп шыва пăнђăрт! тутарђĕ. Вара супăнпе лайăх çуса йађĕ. Ваннăран кăларсан шăлса типĕтсе мана айалтан шурă кĕпейĕм тăхăнтарђĕ, çийелтен хăмăр кĕпе тăхăнтарђĕ. Вара малтан кĕнĕ пӳлĕм урлă тепĕр пысăк пӳлĕме кӳртсе йађĕ. Кунта кĕрсенех, епĕ тĕлĕнсе хытса кайрăм. Ман пек хăмăр кĕпеллĕ ађапăђа сĕмсĕр нумай! Хăшĕ ђупкаласа çӳресе выљаççĕ, хăшĕ урайна ларнă та пӳрт пеккисем тăваççĕ. Манăн куç-пуç ђарăлса кайрĕ. Никĕш ушкăн патне те пыма хăймасăр тăратăп. Хайхи ман пата икĕ хĕрађа пырса тăђĕç.

Кусем Хвеклапа Макийа пулнă. Пĕри ђăваш, тепри тутар хĕрĕ. Вĕсем манпала выђама пуçларĕç. Хвекла мана хăй пуканине панăђђĕ. Кайарах епĕр Хвеклапа, Макийапа пит туслашса кайрăмăр. Халĕ нумай пулмасť, епĕ вĕсенђен çыру илнĕђђĕ. Хвеклапа Макийа иккĕшĕ те уђђиттĕле тухмалли технĕккумра вĕренеççĕ.

Çапла епĕ ађа çуртне лекрĕм. Çак кунран вара манăн песприсорнăйсен хушшинђи пурнăç пĕтрĕ—урăх пурнăç пуçланђĕ. Ĕмĕр манас çук çав хамшăн телейлĕ куна—хам ађа çуртне пырса лекнĕ куна!

Марине йулашки сăмахсене кăмăлне çĕклентерсе каларĕ. Епĕ хам та Маринешĕн хĕпĕртесе кайрăм.

— Вара миçе çулђђен пурăнтăн есĕ ађа çуртĕнђе?

— 1927-мĕш çулђђен. Епĕ ађа çуртĕнђе тĕрлĕ ĕçе вĕрентĕм. Ултă çул хушши хут вĕрентĕм. 1925-мĕш çулта пирĕн ађасене Лаиш уйесĕнђи ађа çуртне куçарђĕç. Кунта пирĕн улмуççи пахђи, çĕр-çимĕç пахђи, çиђĕ пусăллă уй пурђђĕ. Çакăнта вара епĕр ик çул хушши хресђен ĕçĕпе пиçрĕмĕр. Йалхуçалăх йĕркине ĕнтĕ епĕ хамăн алăри пўрнесене пĕлнĕ пек пĕлетĕп.

— Хăвăр йала хăçан килнĕ есĕ?

— Иртнĕ кĕркунне килнĕ. Епĕ вунçиђђĕ тултарсан ађа çуртĕнђен тухса пĕр хĕл, пĕр çу совхосра акрономпа пĕрле шалу илсе ĕçлесе пурăнтăм. Вара ђун хамăр йалалла, тăван çĕршывалла туртрĕ.

Пурӑнма куккасем патне кӗтӗм. Кӑҫал хӗлле ликвитаттӑр пулса ӗҫлерӗм...

— Тата хӗрарӑмсем хушшинче, терӗм епӗ Марине сӑмахне ӑшшӑн пӳлсе.

— Унта та ӗҫлекеленӗ. Татах ӗҫлес тетӗп-ха. Рапфакалла та тапаланатӑп та... Кӑҫалах пулаймӗ.

— Мӗншӗн апла? Хатӗрленсе ҫитмени?

— Хатӗрленсе ҫитересси мар. Епӗ такҫанах хатӗр. Рапфака кӗрессипӗрер-икшер ҫул хушшинчех манран тармӗ, тетӗп. Рапфака кӗресси—вӑл хамӑн ӗҫ, хамшӑн вӑл...

Марине хӑй шухӑшне татсах каласа хума хӑйаймасӑр тӑнӑ пек тӑрат. Сасартӑк Марине хӗрӳллӗн калама тытӑнчӗ. Сасси те кӑкринчен ҫирӗппреххӗн туха пуҫларӗ.

Хам пӗчӗк чух пуҫпех пӗтсе ларас, пӑсӑлса пӗтес ҫӗртен... ҫӑлӑнса йулнӑшӗн... епӗ ҫӗнӗ пурӑнӑҫшӑн тӑрӑшӑп, ӗҫлӗп, тесе сӑмах патӑм. Пионера кӗнӗ чух та, комсомола кӗнӗ чух та епӗ хам шухӑшсене халӑх хушшинчи ӗҫе тума ҫирӗплетнӗ...

Манӑн Маринене пит хисеплесе, йуратса пӗтӗм чӗререн ырӑ сунса мӗн те пулин калас килчӗ.

— Ним мартан ҫын пулнӑ есӗ. Ахаль мар — Ним марри мӗн пурӗ пулӗ тенӗ, терӗм епӗ.

Ҫав самантрах прахут ҫухӑртса йачӗ. Епӗр ӑйӑхран вӑраннӑ пек шартах сикрӗмӗр. Прахут ҫине кӗме васкаса утрӑмӑр.

хё 14 пус.
на коп.